УХСАЙ ЯККĂВĔ

# ТЕЛЕЙ ЮМАХĔ




ЧĂВАШГОСИЗДАТ • 1940

Обязательные
экземпляры в количестве 5.
экземпляров
получены
«18» июля 1940 г.
Подпись

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# ТЕЛЕЙ ЮМАХĔ

Укерчĕксене
**Г. ХАРЛАМПЬЕВ**
тунă

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКĂР 1940

*ВӐТАМ ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЛЛИ*

Редактор **Кузьма Чулгась**
Тех. редактор **Ф. Яковлев**
Корректор **А. М. Алюшин**

Послано в произ. 5/III—40 г.
Подписано к печати. 2/IV—40 г.
Уполн. Чувашглавлита № 1362
Зак. № 170 Тираж 5000 экз.
Фор. б 60×92 1/32 Объем 1 п. л.

1-я типография НКМП ЧАССР.
г. Чебоксары. Дом печати.—

Асап патшӑ ҫӗрӗнче,
Выҫлӑх касси ялӗнче
Авалтанах-ӗлӗкрен
Ҫӗр пек пысӑк хӗнлӗхре
Шавла-шавла, кӗрлесе,
Асаттесем-вӗрлесем
Тӑснӑ мӗскӗн ӗмӗре;
Хӗсӗртен хӗсӗр ҫӗре
Чӗрнӗ суха шӑрчӗпе—
Йӗппе пусӑ алтнӑ пек
Йывӑр пулнӑ пурӑнӑҫ,—
Ниҫта та ҫук пӑрӑнӑҫ.
Анчах аслӑ ҫуртсенче
Юман сӗтелсем ҫинче,
Пуян кӑмӑлне уҫса
Янӑранӑ ҫут укҫа,
Пӳлме тулли тырӑсем
Нихӑҫан та иксӗлмен,
Хура вӑрман варринче
Йывӑҫсен хӑвӑлӗнче
Сӑвӑслан мар, вакша мар
Пыл-пыллланӑ хурт-хӑмӑр.

Асаттесем-вӗрлесем
Телей ҫулӗ йӗрлесе
Кӑмӑл тулли кун курман,—
Тупӑк тунӑ юмантан.
Кӗтнӗ вилӗм ҫитнӗ те,
Пӗр хӑлаҫ кӑна ҫӗрте
Килнӗ канӑҫ кунӗсем—
Ҫӑмӑл пулччӗр тӑприсем!
Хумсен хӑйсен сиккине
(Тин ҫуралнӑ хумсене)
Хӑварнӑ пек, ваттисем
—Ҫӗртисене пил—тесе,
Хуйхисене, чир-чӗре
Пире ан хӑварччӗрех,
Юррисене, кӗввине
Хуччӗр пирӗн чӗлхене,
Телей юлтӑр ҫӗр ҫине,
Хурлӑх путтӑр ҫӗр айне!

---

Ҫуллен ҫулах ҫуркунне
Ҫырма тӑвӑр ҫыранне
Ҫӗмӗрчӗ те тулхӑрчӗ,
Юшкӑн хывса ахӑрчӗ.
Хура пӗлӗт капланса
Аҫа ҫапса, шартлатса
Ҫутӑ ҫиҫӗмӗн ҫиҫсен,
Сехри ҫукчӗ этемсен.
Чӗреслетсе ҫӑмӑрсем
Ҫуса иртсен, тӑпрасем



Çăваннипе, масарта
Тупăксенчен, аялтан
Тухса пычĕç сирĕлсе
Хăрăк сарă шăмăсем.
Эпĕ тĕл пултăм пĕрре
Масар çинче, чикĕре,
Этем пуçĕн каптăкне
Катăкрах янахлине.
Палларăм, хаклă тусăмсем,
Пулчĕ манăн асаттем.
Çĕр валеçнĕ чух, авал
Хире тухнă пĕтĕм ял.
Карма çăвар пуянсем,
Тăрнаккай туя илсе,
Хăйма пекех çĕрсене
Шăпа картнă хăйсене,
Çапла вара харкашса
Кăларнă пĕр тамаша:
Пуян мурĕ çи те кӳп,
Ал чăмăрĕ кӳп те кӳп.
Пуянĕсем халсăр мар,
Силленет кăна чукмар
Çапнă та асаттене,
Хайăрнă янаххине,
Васка кĕтӳçе тата
Çĕре кӳртнĕ çаванта.

---

Васка вилли сăрчĕнче
Пăхса тăрап пĕр пĕччен,

Алăра выртать пуç шăмми
Никам кăмăлне кайми.
Пур пек шурă шăлĕсем—
Кашта тулли шур чăхсем—
Вĕçсе кайнă асаттен
Ĕлĕкех, хăй виличчен.
Алтăр пек куçĕсене
Ман пекех çамрăк чухне
Ӳкнĕ пĕлĕт сăнĕсем,
Ăмăрт кайăк вĕçнисем,—
Халĕ куç хуранĕнчен
Хура тăпра йăтăнчĕ.
Эх асаттем! Самана
Лутăркана та сана,
Пушкăрт аслă хирĕнче
Касса вĕрнĕ çил çинче
Йĕпхĕн хура çӳçусем
Ларнă юр пек шур тĕсе.
Мĕншĕн эсĕ тĕнчене
Килнĕ, хуçнă ĕнсӳне?
Этем пулса çӳриччен,
Хура халăх çĕрĕнче
Пулмалаччĕ хур-хуххи,
Курмăттăн элчел* хуйхи
Мамăк пулса вĕçĕттĕн,
Хĕр минтерне кĕрĕтĕн.
Пулмаллаччĕ сан, иккен,

*Элчел—пурнăç шăпи.

Лапсăркка аçа кикен—
Курмăттăн çак асапа.
Вăштин-вăштин çавапа
Кĕрхи кунта касăлса
Чĕркуç таран пакуса
Кĕрĕттĕн те хĕрĕттĕн,
Вĕт çăмăрпа çĕрĕттĕн,
Çавраçилсем килĕччĕç
Пĕлĕт çумне илĕччĕç,
Касă пĕлĕт пулăттăн
Хыткан çĕре çăвăттăн,—
Пирĕн кăмăл туличчен
Тырă-пулă ӳсĕччĕ,
Кĕрхи кунсенче вара
Пасмари тулли сăра
Кĕрекене килĕччĕ,
Тутасене тивĕччĕ,
Сана вара, асаттем,
Тавтăвĕччĕç юрăсем.
Тырă пĕрчи тутанса
Шăпсăр шăпчăксем ансат
Çулла çурçĕр тĕлĕнче
Кĕрлĕччĕç сад-пахчине.

---

Телейсĕр асаттесен
Ĕнтĕхнĕ тăванĕсем
Ырă та мар, тăн-тăн мар
Мăшкăллă пурăнтăмăр,
Çурхи ăшă кунсенче,

Тăри юрри айĕнче
Ула-чăла уйхирсем
Пире хирĕç хирĕлсе
Выртатчĕçĕ акрамат—
Унта эпир акрăмăр.
Пÿлме тулли тырăпа
Кĕрлĕ мăнтăр выльăхпа
Килсен пурлăхлă ĕмĕр—
Хавасланас терĕмĕр.
Ака-туйĕнче тур ут
Пултăр çиçĕм, пултăр вут,
Çилккеç çилхи витĕрех
Çилсем вирлĕ вĕрччĕрех,
Каччă пултăр сĕлкĕллĕ*,
Сĕлки пултăр тĕрĕллĕ,
Тĕрри çинчи кĕлетке
Пултăр чечен хĕр-пике,
Хĕр аллинчи сар ача.
Вăйлă ăмăрлă ача
Çăлтăр пире асапран;
Пултăр телей тупакан
Кăтарнă çавраçилсем,
Вăрмансене силлеçе,
Çуллен çулах ăнсăртран
Темĕнле хăяматран
Типсе хăртăннă çĕртен,
Хура тусан кăларса,

* Сĕлкĕ — Ака-туйĕнче паракан тутăр.

Асар-писер ваÿрканса,
Çавăрăнатчĕç вăр та вар.
Кам айăплă? Мĕн тăван?
Хире пăх, тинкер уя,—
Кутамкка çак, тыт туя!
Çаралса пыратчĕ сăрт,
Юлаттăмăр тырăсăр.

---

Тĕнче каçпа витĕнчĕ.
Кĕрлен тăвĕ леш енчен
Тулли уйăх хăпарсан,
Кăкăр çумне ал тытса
Уйăхран тĕпчерĕмĕр:
— Ăçта-ши телейĕмĕр?
— Çичĕ тинĕс леш енче,
Патирек утравĕнче,
Пĕри патша çĕрĕчче,
Сĕт пек шурă кӳллинче
Ишекен кăвакалта
Пур—тет—ылттăн çăмарта,
Çавăнта телейĕмĕр.
— Чĕп пек мар-ши?—терĕмĕр.
Уйăх ним чĕнмесĕрех,
Шупкаланнă пĕлĕтре
Сӳнсен, эпир ирхине
Шурă çĕмĕрт пахчине
Шăпчăк патне кĕтĕмĕр:
— Ăçта-ши телейĕмĕр?
— Ту-паттăр çĕршывĕнче,



Сӗм хура чăтлăхсенче
Ҫичӗ пуҫлă пӗр упа
Пурăнать—тет—шăл та палт,
Хырăмӗнче пытарса
Усрать—тет—пӗр арча:
Ҫăлтăрсăр хура ҫӗре
Ҫутатан темле ҫӗрӗ
Арчинче пурри ҫинчен
Илтнӗччӗ юмахсенче.
— Ҫав ҫӗрӗ телейӗмӗр
Пулас ҫук-ши?—терӗмӗр.
Шăпчăк чӗнменне кура,
Шеллерӗмӗр хамăра.
Вара эпир ирхине
Пăхрăмăр пӗлӗт ҫине,
Хӗвелтен тӗпчерӗмӗр:
— Ăҫта-ши телейӗмӗр?
Юн вылярӗ чӗрере,
Каларӗ хӗвел пире:
— „Кайăр аслă ҫулпалан,
Пыра-киле тӗлпулан
Чăнкăран та чăнкă ту—
Унтан каҫ та телей туп!
Ҫавă ту умне ҫитсен,
Тӗлех пулӗҫ стариксем,
Тӗрӗслӗх кӗнекинче
Вулӗҫ телейӗр ҫинчен
Ăшă парса пурсăра
Эп ҫутатăп ҫулăра.“

Килленсе итлерĕмĕр,
Тавтапуç хĕвелĕмĕр!

---

Çĕрле уйăх çуттинче,
Куллен хĕвел ăшшинче
Эпир йышлă ушкăнпа
Хĕвел кăтартнă çулпа
Çичĕ уйăх утрăмăр,
Типсе çитсен, сыпрăмăр
Пăртак ăша кантарма
Курăк çинчи сывлăма.
Çăпатасем çĕтĕлсен,
Урасен тупанĕсем
Чуллă çулсем çийĕнче
Суранланчĕç, çийĕнчĕç—
Хăть ĕсĕкле, хăть те йĕр,
Хыçа юлать юнлă йĕр.
Çапла, пĕрре, ирхине,
Чарăнтăмăр ту умне,
Пĕрерĕн тăрса утма
Выртать тăвăр пĕр сукмак:
Ик айккипе кайăксен
Чĕвĕлтетрĕç юррисем.
Пĕр шăтăка антăмăр,
Кăмăллă тĕлпултăмăр
Икĕ ватă старике.
Хаклă ылттăн кĕнеке
Выртать вĕсен умĕнче.
Тĕрĕсрен тĕрĕс тĕнче

Çак кĕнеке пичĕнчен,
Кайăк хăйĕн йăвинчен
Вĕçнĕ пекех, кайĕ-ха
Асапри тавралăха.
— Салам-алик—терĕмĕр,
— Ăçта-ши телейĕмĕр.
Ӳкĕтлесе чĕререн
Каларĕç çапла пире:
„Çак ту урлă каçăр та,
Çул юпленнĕ вырăнта,
Ĕмĕрхи хуралçă пек,
Кутамас патвар тирек
Пĕлĕт çӳллĕш курăнĕ,
Каллĕ-маллĕ авăнĕ.
Умне тӳрĕ кайăр та,
Курăр ăмăрт-кайăка,
Вăл сиренпе хĕпĕртĕ,
Ĕнтĕхнĕ çеçен-хирте
Вĕрентнĕ телейленме,
Пусмăрлăха пĕтерме.
Илĕр çакă тутăра,
Çерем çинче улăхра
Сарсан—килĕ кĕреке—
Сире хăват кĕрĕ-ха.
Савăнăр та шăхăрăр,
Тĕрекленĕ шăнăрăр,
Чăнкă тăва каçăр та—
Ĕмĕт выллĕ куçăрта“.

---

Икĕ ватта тавтуса,
Пиллĕ ĕмĕр хăварса,
Теветкеллĕ утрăмăр,
Сукмак çине тухрăмăр.
Таса çăл ту умĕнче
Хĕвел çутти айĕнче
Вылянине куртăмăр,
Хамăр такмакларăмăр:
„Хура вăрман—хуйхăмăр,
Унăн витĕр тухрăмăр.
Ана сирес кăмăлпа
Вăрăм çулпа, çак çулпа
Ку таврана килтĕмĕр,
Хурама пек пĕвĕмĕр
Çичĕ уйăх тăршшĕнче
Сĕлпер кайса авăнчĕ.
Эх, елчелĕн тутăрĕ,
Шелле, хапăл ту пире,
Инçе çулран килекен
Кăмăлне пар кĕреке!"
Тутăр пулчĕ пирĕн май,
Çав самантрах хур какăй
Турилккесем çийĕнче
Пăсĕпеле витĕнчĕ.
Кĕтмен çĕртен вăр та вар
Килсе ларчĕ сăмавар.
Çирĕмĕр те ĕçрĕмĕр,
Вăйпа-хăват илтĕмĕр.
Йĕри-тавра кайăксен

Чĕвĕлтетнĕ сассисем
Савăнтарчĕç те пире,
Кăмăл тулчĕ чĕрере.
Çава çулса сиреймен
Çаран хумханса илсен,
Тухас килчĕ халăхăн
Утă çулма улăха.
Чăнкă тăвăн тăррине
Хуплакан пĕлĕтсене
Пăхрăмăр, юрларăмăр,
Пурпĕр унта каçăпăр,
Çитĕпĕр те аякка:
—Аçта-ши телейĕмĕр?—
Тупас килет—тейĕпĕр.
Çывăртăмăр.Тĕлĕкре
Куртăмăр тăван хире,
Пĕлĕт пек йышлă сурат
Тулнă анлă пусăра;
Куçа-пуçа илĕртсе
Йĕкĕр капан—ĕçкĕртсем
Ултшар урасем çинче
Ларнă анкартисенче.
Çӳле пăхса ил те кур:
Кĕрхи мăнтăр кайăк-хур
Вĕçсе çӳрет картипе.
Ту çинче пусă типет.
Патшана, улпутсене
Çакнă юпасем çине,
Вĕсене тек сăха-сăха

Кăшкăрать ушкăн çăхан.
Ешĕл аслă улăхра
Вăрантăмăр йăхран.
Пирĕн умра пĕтĕмпе
Шур чечеклĕ кĕпепе
Хумханаççĕ çĕмĕртсем,
Хутран-ситрен çил килсен,
Куккук хурама çинче
Пĕр хулăммăн, пĕр çинçе
Яранса аватнине,
Тĕрлĕ тĕслĕ лĕпĕшсем
Каллĕ-маллĕ вĕркĕшсе
Ирĕккĕн вĕçнисене
Манаймăпăр ĕмĕрне.

---

Çул çине хускалтăмăр,
Пурте харăс утрăмăр.
Кĕмĕл тĕслĕ кăлкана
Килсе ура пуссанах—
Утма пире çăмăл мар,
Сисмесĕрех йăр та яр
Шăва-шăва ўкнĕ чух,
Пите чĕрет вутлă чул,
Халпа хăват пĕтиччен
Нăкăт * хулли тĕпĕнчен
Тыта-тыта пурсăмăр
Пĕр чĕнмесĕр утрăмăр.

* Шăлап евĕр лутра йывăç тĕмисем.

Хура пӗлӗт ӑнсӑртран
Тухса килчӗ аякран.
Хӗç пек çиçӗм çуталса
Йӑри-яри хуçӑлса
Йӑл выпярӗ пуç çинче.
Пӗлӗт кашти хуçӑлчӗ.
Аçа çапса çӗмӗрчӗ,
Аслати те çухӑрчӗ
Çумӑр ячӗ пӗрхӗтсе,
Çерçи пуç пек пӗрчисем
Пӑрпа хутӑш çапӑçса
Çапӑнаççӗ çӑтта та çат.
Çӑмӑр вӑйлӑ шывӗсем
Тӑпрана, чула илсе,
Çырмасем пек пулчӗç те
Юхма тытӑнчӗç çӳлтен,
Пирӗн урлӑ хумӗсем,
Çӳçентерчӗк сиввисем
Каçса кайрӗç сиккипе,
Пиртен хӑшне хӑйсемпе,
Юхтарса, выля-выля,
Илсе кайрӗç аяла.
Эх, юратнӑ юлташсем,
Тарӑн çырана çитсен,
Ӗмӗр юшкӑн айӗнче
Хӑтӑлчӗç асапсенчен.
Хӑтӑласса хӑтӑлчӗç,
Аллисенчен йывӑр ӗç
Иртӗ-кайӗ пӗтӗмпе,



Пуçран çӳçсем ӳкнӗ пек.
Кӑчӑрт-кӑчӑрт çурласем,
Вырма вӑхӑтсем çитсен
Пулас çук аллисенче
Каçалӑксен умӗнче.
Канӑçсӑр текерлӗксем
Уйхир тӑрӑх ихӗрсе
Шур тӗтреллӗ ирсенче
Лаша пуçӗ çийӗнче
Хавасланса, явӑнса
Паракан хитре сасса
Вӗсем илтмӗç малашне,
Тутанаймӗç çӑл шывне.
Анчах вӗсен ачисем
Алӑк тапса çӳресе
Çичӗ ютсен хушшинче,
Харампырсен килӗнче
Йыттисемпе хирӗçсе
Ан çӳретӗрчӗç тесен,
Кирлех халӑхӑн сасси—
Чӑн-чӑн телей тупасси.
Виçӗ кун хушши аран
Алӑран та урӑран
Юн юхтарса шурӑмӑр,
Ту урлӑ та каçрӑмӑр.
Ки-как, ки-как тӑрнасен
Виç кӗтеслӗ картисем
Тыла-пуççи айӗнче
Хӑрса пӗтнӗ шурсенчен

Тараççĕ, йĕре-йĕре,
Хăвараççĕ пуш хире.

---

Ĕлĕк те тавралăхра
Асран кайми сухара
Çерем витнĕ уйхире
Пĕчĕккĕн чĕре-чĕре,
Кăнтăрла та каç та ир
Тарăхаттăмăр эпир,
Анчах сĕм-сĕм вăрмансем
Ахăрса та кĕрлесе
Вĕççĕр-хĕрсĕр тăнинче,
Кайăк-кĕшĕк сассинче
Илем пурччĕ çут тĕнчен.
Çут миталлă хурахсем,
Шур алăллă улпутсем
Хĕстерсе киле-киле
Тулчĕç пирĕн çĕрелле,
Ытла чухăн халăха
Персе чикрĕç хурлăха,
Вăрмансене кастарса,
Пысăк сулăсем çыхса
Атăлпа та Сĕвепе
Ăсаттарчĕç çăвĕпе.
Ăтăрсенпе тилĕсен
Ытарма çук тирĕсем
Тĕнчери хуласенче
Майрисен çухисенче
Çÿре-çÿре, мухтава

Кӳртрĕç пирĕн çĕршыва.
Эх, еплеччĕ ир çинче!
Шăпчăксем çинçен-çинçен
Шăрататчĕç улăхра,
Хавас кӳртсе хамăра.
Çуркунне çапла пĕрре
Улпутсем хучĕç пире
Шăпчăк тытма кулапай.
Ерне хушши пит чылай
Улăхра танккарăмăр,
Шăпчăксене тытрăмăр,
Юрлĕç—тетпĕр—пит çинçеп
Улпутсен таврашĕнче.
Анчах пĕрре, каçхине,
Шăпчăксен чĕлхисене
Улпутсем пĕçерне, тет,
Пулнă—тет—нумай котлет,
Лашасем кӳлсе кăна
Çӳренĕ—тет—хăнана.
Çапла, тăвансем, вара
Хамăрăн тавралăхра
Вăрмансăр та юрăсăр
Эпир тăрса юлтăмăр,
Халĕ выçă кайăк та
Тарать пиртен аякка.

---

Аслă çулăн юппинче
Пĕлĕт çӳллĕш пĕр пĕччен,
Ĕмĕрхи хуралçă пек,

Ларать ватă пĕр тирек.
Ун тăрринче ларакан
Ăслă ăмăрт-кайăкран
Халăхпа тĕпчерĕмĕр:
—Ăçта-ши телейĕмĕр?
Сулса анлă çунатне
Вăл каларĕ сăмахне:
—„Сирĕн хĕнлĕхлĕ çĕре
Çуллен çулах вĕçсĕрех
Хыçлăх выçлăх яракан,
Пусмăрласа тăракан
Ниçта та мар, çĕр çинче
Ылттăн сĕтел умĕнче
Пурвать сирĕн юнăрпа
Тăхăр пуçлă пĕр упа,
Эсир ăна вĕлерсен,
Кĕллентерсе вĕçтерсен,
Телей тени тĕнчере
Пулĕ ĕмĕр-ĕмĕрех.
Çак тирекĕн тĕпĕнчен
Хăй тĕллĕнех çивĕччĕн
Касакан хĕç илĕр те,
Килĕр пĕр пек ĕмĕте,
Утăр суллахай çулпа,
Тăхăр пуçлă пĕр упа
Хăйĕн ылттăн ӳплинчен
Вăйĕ çитнĕ таранччен
Вăйлă тăвăл унчухне
Кăларĕ сирĕн çине.

Çĕршер çулхи йывăççем
Тымарĕсен тĕпĕнчен
Ал-хапăлта çăлăнĕç,
Çӳле вĕлт-вĕлт сирпĕнĕç,
Вара çиçĕм çиçтерсе
Вăркăнтарăр леш хĕçе!“
Аслă ăмăрт-кайăка
Ăш кăмăла каякан
Сăмахпа мухтарăмăр,
Суллахая утрăмăр
Кĕмĕл вăрман ăшĕнче
Хитре сассем илтĕнчĕç.
Улми ташлать, çулçи çупать,
Кайăк сасси янăрать.
Апла иккен, ку упа
Ĕмĕр çăтă пулупа
Илсе килнĕ хăй патне
Тĕнчери илемсене,
Пирĕн вĕри куççуле
Ĕмĕр-ĕмĕрех çуллен
Пуха-пуха пынă та
Кӳлĕ тунă çакăнта.
Унта халĕ йăл та ял
Ушкăн ылттăн кăвакал
Ярăнса кăна çӳрет,
Куççуль кӳлли силленет.
Упа хăйĕн ӳплинче
Мĕкĕрешни илтĕнчĕ.
Тусанлă касă çилсем



Ахăрсан та шилесен,
Чаранмасăр, вĕçĕмсĕр
Вăрман кашлать кĕр те кĕр,
Пĕр тăвăла паранман
Нихăçан та аванман.
Вата хыта йывăçсем
Вăтăр-ватăр вĕл вĕçсе
Тымарĕпех мĕнĕпех
Сирпĕнеççĕ пĕтĕмпех.
Кĕрхи çулçă ӳкнĕ пек
Тăрнасем ушканĕпех
Акăш-макăш чул тăва
Çапăнаççĕ вăр та вар.
— Эх, хăватлă хĕçĕмĕр,
Сирпĕн ĕнтĕ çиçĕмĕн! —
Тесе харсăр пурсăмăр
Сасартăк кăшкăртăмăр.
Пирĕн сасса илтрĕ çеç—
Вăр-вăркăнчĕ çивĕч хĕç.
Кăштах тăрсан, пуç çинче
Тăвăл кăштах пусăрнчĕ.
Ылттăн ӳпле патнелле
Хура çиле хирĕçле
Харăс тăрса пурсăмăр
Çурхи шыв пек чупрăмăр,
Усал, хаяр упанне
Хĕç каснăччĕ виç пуçне.
Эпир мĕнпур вăйпалан
Ултташне пĕрех самант

Вакла-вакла хутăмăр,
Тапта-тапта тăкрăмăр.
Çунтартăмăр виллине,
Унăн йĕрĕнчĕк кĕлне
Çил çинче вĕçтертĕмĕр,
— Пĕтрĕн ĕнтĕ—терĕмĕр.

---

Пире телей паракан
Аслă ăмăрт-кайăка:
— Эх, атте-хĕвелĕмĕр,
Тавах, çулпуç!—терĕмĕр.
Хĕрлĕ ялав айĕнче,
Хĕвел çутти ăшĕнче
Тăван киле килтĕмĕр,
Сисĕнчĕ телейĕмĕр,
Вĕтĕ çăмăр çунă ир.
Куç виçейми аслă хир
Хумханать те хумханать,
Çичĕ тĕслĕ асамат
Карса хунă чип-чипер
Хитререн хитре кĕпер.
Тырă-пулă тап-таса
Пĕр лапчăнса, хăпарса
Пирĕн кăмăл пек чечен
Силленет тӳремсенче,
Пучахĕсем—турпасла,
Хăмăлĕсем—хăмăшла.
Хăймаллă сĕт паракан
Чĕркуç таран курăка

Тутанса та кавлесе
Мăшлатаççĕ ĕнесем.
Улăх! Халăх улăхĕ!
Ăçта унăн хурлăхĕ!
Тухнă унта пĕтĕм ял,
Хĕвел çинче йăл та ял
Вăштăн-вăштин çавасем
Ўкереççĕ паккуссем.
Çĕмĕртсем те хамăрăн
Хуп-хуран та хăмăрăн
Пирĕн куç пек куçхĕссе
Чăп тулаççĕ чĕресе,
Пулăсем каçпа вара
Сиккелеççĕ атмара.
Çутă уйăх айĕнче,
Çĕмĕртлĕхсен хушшинче
Йĕркипеле шăп кăна
Шăрантаран шăпчăка
Итле-итле, чĕрере
Пирĕн юрă чĕрĕлет:

I.

— Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр.
Йалтăр-йăлтăр ялтăран,
Çичĕ-çичĕ çăлтăра
Хура вăрман хушшинчен
Тата çўллĕ ту çинчен

Пĕтĕм халăх—пурсăмăр
Пăха-пăха тăтăмăр.

II.

— Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр.
Тăвăр йăран хушшинче,
Суха-пуçĕ умĕнче
Йывăр пусса çӳресе,
Халран кайса ĕнтĕхсе
Вырта-вырта вилтĕмĕр,
Курăк пулса ӳсрĕмĕр.

III.

— Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр.
Курăк пулса ӳсрĕмĕр,
Кĕрхи кунта çĕртĕмĕр.
Вăйлă пĕлĕт килчĕ те
Илчĕ пире пĕлĕте,
Çăмăр пулса антăмăр,
Уйхире шăвартăмăр.

IV.

— Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр.
Тырă пулса лартăмăр,

Вырмара касăлтăмăр,
Улпут хуçа умĕнче
Ылттăн тирĕк çийĕнче
Эпир апат пултăмăр,
Юнĕ тăрăх чупрăмăр.

V.

— Эх, телей-телейĕмĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтрĕмĕр.
Акă ĕнтĕ тупрăмăр,
Асаплăхран тухрăмăр.
Пире телей паракан
Аслă ăмăрт-кайăка
Пиртен ĕмĕр чыс та тав,
Пиртен ĕмĕрлĕх мухтав.

---

Çакă юрă сассипе
Уй та хир те пĕтĕмпе
Хумханать те хумханать,
Кăмăлсене йăпатать,
Йĕлме çинче çурхи кун
Авăтать чăпар куккук.

---

Пĕрре сарăлчĕ хыпар:
Амăрт-кайăк чĕрĕ мар.
Шартлама сивĕ хĕлле
Хаяр çиле хирĕçле
Çара пуçăн пурсăмăр
Пĕр чĕнмесĕр утрăмăр.

Ватăран та ваттисем,
Юр пек шурă çӳçлисем,
Мĕн тӳсмен те мĕн курман,
Нихăçан та макăрман,
Анчах вĕсен çакă çул
Пăчăртанчĕ тăр куççуль.
Халăх пуçĕ çиййĕнче
Хуласенче, ялсенче
Явăнчĕçĕ вĕлкĕшсе
Траур сăнлă ялавсем.
Ялан çилсем вĕрнипе,
Çăмăрсем çĕмĕрнипе
Çӳл тусем пиншер çултан
Пулса юлĕç çĕрпе тан.
Аслă сарлака шывсем
Урăх юхăмсем илсе
Сăрхăнса тип хирсенче
Çухалĕç çĕр пичĕнчен.
Халăх вĕсем мĕнлине,
Хăçан ăçта пулнине
Астăваймĕ тăнĕнче,
Анчах сана, сан çинчен,
Ăмăрт-кайăкăмăр, ялан
Асилĕç юрăсенче,
Асăнĕç юмахсенче.
Ленин! — Эс-хĕвелĕмĕр.
Ленин! — Эс-телейĕмĕр!
Хамăр ăшă чĕререн
Тухнă юрă - кĕвĕре

Сан ятна хакларăмăр,
Кĕслесем каларăмăр.
Аслă Ленин! Эс пире
Тĕксĕм нўрлĕ тĕрмерен,
Выçлăх касна çĕрсенчен,
Хытса кайнă хирсенчен
Илсе килтĕн тўп-тўрех
Чăн телейлĕ ĕмĕре,
Пўртсĕрсене — аслă пўрт
Ваттисене — яш ўт-пў,
Куççăрсене — сывă куç,
Шывсăрсене — çут çăлкуç
Парса пире турăн тан,
Çăлса илтĕн асапран.
Сан шухăш—хĕвелĕмĕр
Хĕлхемĕн те хĕлĕмĕн
Тĕнче тăрăх пур çĕре
Саралать пĕр вĕççĕрех:
Ефрат шывĕ хумĕсем
Çийĕнче сан шевлўсем;
Канада вăрманĕнче,
Тропика чăтлăхĕнче
Çулçăсем пек калаçса,
Сукмаксем тăрăх каçса
Ырми-канми вĕçĕмсĕр
Эс çўретĕн кун та çĕр;
Чĕнетĕн чурасене
Çĕмĕрме сăнчăрсене.

1937—1938.

Цена 80 коп.

Яков УХСАЙ

# СКАЗКА О СЧАСТЬЕ

на чувашском языке

Госиздат ЧАССР 1940